



# КУЛЬТУРА

## Ĕмĕрсен еткерĕ

*Пултарулăх*

# Республика кунне халалласа

**_Виçĕ çул каялла Чăваш наци библиотекинче ĕçлеме пуçланă «Мерчен» музыка тĕпелĕ ирттерекен мероприятисене кĕнеке вулама юратакансем кăна мар, ĕç ветеранĕсем, ентешлĕхсен хастарĕсемпе илемлĕхпе тăван тавралăх тусĕсем те йышлăн çÿреме пуçларĕç. Вĕсене пĕтĕçтерекенсем – Наци библиотекин пултаруллă ĕçченĕ Вера Архипова, Раççей Федерацийĕн Композиторсен союзĕн членĕ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Светлана Макарова, ЧНК шур сухалĕ, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Кипеч тата ЧОКЦ ертÿçисем._**



● *«Шанчăк» халăх хорĕпе пĕрле.*

Çуркуннехи уйăхсенче «Мерчен» РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ тата халăх артисчĕ Аристарх Орлов-Шуçăм çуралнăранпа 100 çул çитнине, Пĕтĕм Раççейри тата Чăваш Енри тĕрлĕ фестивальпе конкурс лауреачĕ Клара Осокина ертсе пыракан «Тарават» халăх ансамблĕн тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика университечĕн профессорĕ, Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зинаида Козлова иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче йĕркеленĕ «Юрай» фольклор ансамблĕн юбилейĕсене халалланă савăнăçлă каçсене ирттерчĕ.

Çак кунсенче вара «Мерчен» тĕпелĕнче Шупашкарти «Салют» культура керменĕнче шăп 15 çул каялла çуралнă ветерансен «Шанчăк» хорĕ хăнара пулчĕ. Чăваш Ен кунне халалланă савăнăçлă каç пуçламăшĕнче 2008 çултанпа «халăх хорĕ» ятпа çÿрекен коллективпа ЧР Композиторсен ассоциацийĕн ертÿçи, Пĕтĕм Раççейри музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Зимин паллаштарчĕ.

– Çĕнĕ ĕмĕр умĕн Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Арланов ертсе пыракан коллективра пурĕ те вун пĕр ветеран юрланă. Çавăнтанпа пысăках мар ансамбльтен пуçланнă таса та темиçе сасăпа хăватлă, çепĕç сасăллă хор. Артистсен ăсталăхĕ çулран çул çĕнĕ ÿсĕме хăпарчĕ. Паян Шупашкарти Мускав районĕнчи ветерансен хорне кÿршĕ регионсенче те кĕтеççĕ. Вăл – тĕрлĕ конкурспа фестиваль лауреачĕ. Çĕртме уйăхĕ вĕçлениччен коллектив хăйĕн концертне республикăри тăватă хулапа районта кăтартать, – терĕ Николай Зимин.

Çак хорта çулĕпе чи асли – иртнĕ ĕмĕр варринче Канашри учительсен институтне пĕтерне, унтан Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ аслă шкулăн икĕ факультетĕнче тарăн пĕлÿ илнĕ С.А.Карягин. Вăл – Патăрьел районĕнчи Тусари вăтам шкулта çирĕм çула яхăн учительте тата директор çумĕнче ĕçленĕ, РСФСР халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. 1976 çулта Сергей Афанасьевича республикăри «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕ пулма çирĕплетнĕ. 1993 çулта тивĕçлĕ канăва тухсан та пысăк тавра курăмлă ветеран вунă çул «Хыпар» хаçатăн тишкерÿçинче ĕçлерĕ. Çав вăхăтра вăл хăйĕн ентешĕ тата çамрăк юлташĕ Владимир Арланов сĕннипе ветерансен хорне çÿреме пуçларĕ.

Сергей Карягинпа пĕрле хорта çавăн пекех Шупашкарти паллă педагог Николай Васильев, Чăваш АССР халăх артистки Анна Кутузова, агрегат завочĕн поликлиникинче чĕрĕк ĕмĕр ĕçленĕ врач, РСФСР сывлăх сыхлавĕн ĕç отличникĕ Петр Артемьев тата республикăн тĕрлĕ районĕнче çуралса ÿснĕ, чылайранпа Шупашкарта пурăнакан сумлă ветерансем юрлаççĕ.

«Шанчăк» халăх хорĕн юбилей концертĕнче Филипп Лукин, Герман Лебедев, Аристарх Орлов-Шуçăм, Николай Карлин тата ытти композиторăн Чăваш Ен, Тăван çĕр-шыв, юрату тата савăнăç çинчен хайланă юрăсем янăрарĕç. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Арланов ертсе пыракан коллективăн Республика кунне халалланă уяв концертне çавăн пекех хăйсен пултарулăхĕпе «Тарават» ансамбль тата Чăваш Енри паллă композитор, Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ преми лауреачĕ Аврам Бурундуков илемлетрĕç.

■ **Петр СИДОРОВ**